26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ФЕВРАЛЬ 19 ШАМАТКУН 35(6530) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Корсунь-Шевченковский районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен фашистла çарĕсене пĕтерсе тăкни

Украинăри 2-мĕшпе 1-мĕш фронтсен çарĕсем, КИРОВОГРАДРАН çурçĕртерехри районран хĕвеланăç еннелле тата БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районран хĕвелтухăç еннелле наступлени пуçласа ярса, февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ оборонине татнă та, хăюллă та ăста маневр туса, ЗВЕНИГОРОДКăПА ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехри нимĕçсен фашистла çарĕсен пысăк группировкине çавăрса илнĕ. Çапла туса, пирĕн çарсем нимĕçсен ШТЕММЕРМАН генерал-лейтенанчĕн 11-мĕш армейски корпусне тата пехота генералĕн МАТТЕНКЛОТАН 42-мĕш армейски корпусне унăн ăшне хĕссе лартнă. Çавăрса илнĕ армейски корпуссене çак чаçсем кĕреççĕ: ЛИБА генерал-майорăн 112-мĕш пехотнăй дивизийĕ, БЕРМАН полковникăн 88-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ГЕЙНЕ генерал-майорăн 82-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ХОНН полковникăн 72-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ТРАИНБЕРГ генерал-лейтенантăн 167-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ШМИДТ-ГОММЕР генерал-майорăн 168-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ДАРЛИЦ генерал-майорăн 57-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ШЕФФЕР генерал-лейтенантăн 332-мĕш пехотнăй дивизийĕ, ГЕШЕН генерал-лейтенантăн 213-мĕш охраннăй дивизийĕ, ГИЛЛЕ бригадафюрерăн (генерал-майорăн) СС «Викинг» танковăй дивизийĕ тата ЛИППЕРТ майорăн СС «Валония» мотобригади. Тăшманăн хупăрласа илнĕ çарĕсенче 70—80 пин салтакпа офицер пулнă.

Совет командованийĕ—Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандующийĕн заместителĕ Совет Союзĕн Маршалĕ ЖУКОВ, Украинăри 2-мĕш фронтăн командующийĕ арми генералĕ КОНЕВ тата Украинăри 1-мĕш фронтăн командующийĕ арми генералĕ ВАТУТИН, кăлăхах юн тăкас мар тесе тата çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкмалла ан пултăр тесе, 1944 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Корсунь-Шевченковский районĕнче çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсен КОМАНДОВАНИНЕ тата ОФИЦЕРĔСЕН ПĔТĔМ СОСТАВНЕ хирĕç тăма пăрахма хушса ультиматум панă. Ультиматумра çапла каланă:

«Кăлăхах юн тăкас мар тесе, эпир сире парăнмалли çак условисене йышăнма хушатпăр:

1. Хупăрласа илнĕ мĕнпур нимĕç çарĕсем, сирĕнпе тата сирĕн штабăрсемпе пĕрле, халех çапăçма пăрахаççĕ.

2. Эсир пире хăвăрăн мĕнпур çыннăрсене, хĕçпăшалăрсене, боевой снаряжение, транспорт хатĕрĕсене тата пĕтĕм техникăна пĕр сиенлемесĕр паратăр.

Хирĕç тăма пăрахнă мĕнпур офицерсемпе салтаксене пурăнăç та та хăрушсăрлăх паратпăр, вăрçă пĕтнĕ хыççăн Германие е ытти çĕршыва (тыткăна лекнисем хăйсем ăçта каяс тенĕ çавăнта) таврăнма ирĕк паратпăр тесе шантарса калатпăр.

Парăннă чаçсен мĕнпур çыннисен çумĕнче çаксем юлаççĕ: çар форми, уйрăмлăх паллисем тата орденсем, кашнин хăйĕн пурлăхĕ тата хаклă япалисем, старши офицерсен, кунсăр пуçне тата сивĕ хĕçпăшалĕсем те хăйсен çумĕнчех юлаççĕ.

Аманнисене тата чирлисене пурне те медицина енчен пулăшатпăр.

Парăннă офицерсене, унтер-офицерсене тата салтаксене пурне те çийĕнчех апатлантаратпăр.

Сирĕн 1944 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе шутласан, 11 сехет тĕлне хут çине çырса ответ памалла, ответа хăвăрăн представителĕрсемпе пĕрле парса ямалла, вĕсен çăмăл автомобиль çине ларса, шурă флаг çакса, Корсунь-Шевченковский хулинчен Стеблев урлă Хировка патне каякан çулпа пымалла.

Сирĕн представителе пирĕн уполномоченнăй—вырăс офицерĕ Хировкăн хĕвелтухăç енчи районĕнче 1944 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 11 сехет те 00 минутăра тĕл пулать. Эпир парăнма сĕннине эсир йышăнмасан, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тата сывлăш çар флочĕн вăйĕсем сирĕн хупăрласа илнĕ çарсене пĕтерме тытăнаççĕ, вĕсене пĕтерсе тăкнăшăн вара эсир ответлă пулатăр».

Хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен командирĕсем хушшинче совет çарĕсем çавăрса илнĕ нимĕç дивизийĕсен нимĕн тума та май çуккине курса тăнă генералсемпе офицерсем те пулнă, вĕсем совет командованийĕн ультиматумне йышăнса парăнасшăн пулнă. Анчах та хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен командованийĕпе рядовойĕсене Гитлер улталанă. Вăл хупăрласа илнĕ çарсене панă приказра салтаксемпе офицерсене кирек мĕн пулсан та çирĕп тăма хушнă, вĕсене вăл çапла каласа шантарнă: Германи çарĕн верховный командованийĕ «хурана» кĕрсе ӳкнĕ нимĕç çарĕсене çăлма çителĕклĕ мерăсем йышăннă, тенĕ.

Гитлер çавăн пек приказ панă хыççăн нимĕçсен хупăрласа илнĕ фашистла çарĕсен командованийĕ совет командованийĕн ультиматумне йышăнман.

Çав ультиматума йышăнман пирки вара пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ дивизийĕсене татăклăн атакăлама пуçланă, вăйлăн çапăçса, тăшманăн группировкине хăварт пĕтерсе пыма пуçланă.

Тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçса пырса, пирĕн çарсем тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ узелĕсене — КОРСУНЬ-ШЕВЧЕНКОВСКИЙ, ОЛЬШАНА, ГОРОДИЩЕ, ВЕРБОВКА, ПЕТРОПАВЛОВКА, ОРЛОВЕЦ, МЛЕЕВ, ЗАВАДОВКА, ДЕРЕНКОВЕЦ, ТАГАНЧА, ГОЛЯКИ, ЯНОВКА, ВЫГРАЕВ, СТЕБЛЕВ, ШАНДЕРОВКА ятлă пунктсене тата ВАЛЯВА, ЗАВАДОВКА, ТАГАНЧА, СОТНИКИ ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен юлашкийĕсем—3—4 пин çын хăйсен аллинче пĕр ял та юлман пирки Шандеровкăран кăнтăртарахри тип варсенче тата пĕр пĕчĕк рощара пытанса çăлăнса юлма хăтланаççĕ, анчах та вĕсене унта пирĕн боецсем пĕтерсе пыраççĕ.

Хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен çапăçу хирĕнче 52 пин çын ВИЛСЕ ЮЛНĂ. 11 пин çын ТЫТКĂНА ПАРĂННĂ. Нимĕçсем хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен офицерĕсене транспорт самолечĕсем çине лартса 2—3 пин çынтан ытла илсе каяйман пулас.

Февралĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа, нимĕç командованийĕ Звенигородкăран хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри района фронтăн ытти участокĕсенчен 8 танковăй дивизи (вĕсенче пуринчен ытла «Тигр» тата «Пантера» йышши танксем тата хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши тупăсем пулнă) тата темиçе пехотнăй дивизи илсе пынă, вĕсене тата верховнăй командованин резервĕнчен чылай çарсем хушса панă, çапăçу районне 600 ытла бомбардировщик, истребитель тата транспорт самолечĕсем илсе пырса тăратнă, çав вăйсемпе вара Звенигородкăран кăнтăртарахра тулĕнчен пыра-пыра çапса, хăйсен хупăрласа илнĕ çарĕсем патне татса кĕме, вĕсене çавăрса илнĕ ункăран илсе тухма çав тери хаяррăн тăрăшнă.

Питĕ пысăк çухатусем тӳссе, тăшман Звенигородкăран кăнтăртарахра пирĕн çарсен речĕсем хушшине кăштах савăлланса кĕме пултарнăччĕ, анчах та, совет çарĕсем вăйлăн хирĕç тăнине пула, нимĕçсем, çав çапăçусенче халран кайнăскерсем, хăйсен çавăрса илнĕ группировкине пулăшма пултараймарĕç.

Нимĕçсен фашистла çарĕсем, хăйсен çавăрса илнĕ группировки патне кĕрсе кайма хăтланса, февралĕн 5-мĕшĕпе 18-мĕшĕ хушшинче, ВИЛНИСЕНЕ КАНА ШУТЛАСАН ТА, 20 пин салтакпа офицера çити çухатнă.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн çарсем нимĕçсен 329 самолетне (вĕсенчен 179-шĕ «Ю-52» йышши виçĕ моторлă транспорт самолечĕсем), 600 танкне ытла тата 374 тупине ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ. Пирĕн çарсем тăшмантан 25 танк, 134 тупă ТЫТСА ИЛНĔ.

Хупăрласа илнĕ çарсенчен тыткăна лекнĕ нимĕç офицерĕсем каланă тăрăх, хупăрласа илнĕ нимĕçсене çăлма май çукки паллă пулса тăрсан, Гитлер «михĕ ăшне» кĕрсе ӳкнĕ нимĕç çарĕсене тепĕр приказ панă. Çав приказра вăл хупăрласа илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене хăйсен пуркăçĕсене пама, çапла вара вырăс дивизийĕсене хирĕç тăрса вĕсене пĕр вăхăтлăха та пулин тытса чарма хушнă, Германи фрончĕн интересĕсем çапла тума ыйтаççĕ, тенĕ. Гитлерăн çав приказĕ тӳрех çапла тума хушнă: хупăрласа илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен ĕçĕсем вĕçне çитиех начарланса çитсен, ним тума та май çук пулса тăрсан, хăйсене хăйсем персе вĕлермелле, тенĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем тата çапла каласа кăтартаççĕ: хупăрласа илнĕ нимĕçсен фашистла çарĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем нумайĕшĕ çак юлашки 3—4 кун хушшинче хăйсене хăйсем персе вĕлерме пуçланă. Нимĕçсен командованийĕ хушнă тăрăх, аманнă салтаксемпе офицерсене пере-пере вĕлерсе çунтарса янă. Çапла, акă, пирĕн çарсем хăйсем тытса илнĕ Стеблев тата Шандеровка ялĕсенче çунса кайнă нумай автомашина курнă, çав машинăсем çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай пулнă.

Хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкмалли операцие арми генералĕ КОНЕВ юлташ ертсе пынă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне СТАЛИН юлташа

Пирĕн хаклă аттемĕр, учителĕмĕр, тусăмăр Иосиф Виссарионович!

Эпир, Чăваш республикин ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕн участникĕсем, Сире, ăслă çулпуçăмăра тата аслă полководеца хĕрӳллĕ салам яратпăр, пĕтĕм совет халăхĕн телейлĕхĕпе ырлăхĕшĕн малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме ырă сывлăхпа вăй-хал сунатпăр.

Фашистла захватчиксене хирĕç пыракан Отечественнăй аслă вăрçăн йывăр кунĕсенче Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕ нихăçанхинчен те ытларах пĕтĕçсе çирĕпленчĕ, халăхсем хамăрăн Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратни, ăна пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăни уçăмлăн палăрчĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем те, хĕрĕсем, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вырăссемпе, украинецсемпе, белоруссемпе, литовецсемпе, казахсемпе, тутарсемпе тата Совет Союзĕн ытти халăхĕсемпе алла-аллăн тăрса, хăюллăн та паттăррăн çапăçаççĕ. Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсене вунă çынна Совет Союз Геройĕн ятне панă, пирĕн паттăр землякĕсене—Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене 5 пин çынна ытла СССР орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă.

Эсир хăвăрăн 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ докладăрта тылри совет ĕççыннисен хастарлă ĕçне пысăка хурса хакларăр, ĕççыннисем тунă ĕç, тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса, истори кĕрсе юлать, тесе каларăр. Совет халăхĕн çавăн пек патриотла паттăр ĕçĕнче пирĕн Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсен ĕçĕ те пулнишĕн эпир савăнатпăр. Эсир пирĕн ĕçе пысăка хурса хаклани—мĕнпур наградăсенчен те чаплăрах.

Пирĕн Сире, хаклă Сталин юлташ, Эсир Хĕрлĕ Çар валли тырпул, аш-какай, апат-çимĕç тăратас тĕлĕшпе кăтартса панисене пурнăçа кĕртессишĕн Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем мĕнле кĕрешни çинчен каласа парас килет.

Чăваш республикинчи колхозсем 1943 çулта, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, ялхуçалăх ĕçĕсене нихăçанхинчен те лайăхрах, йĕркеллĕрех иртерчĕç. Çуракине 1942 çулхинчен 12 кун маларах туса пĕтернĕ. Çуркунне тырăсем акмалли плана 18.866 гектар чухлĕ ирттерсе тултарнă. Кĕрхи тырăсене те планран 9.000 гектар чухлĕ ирттерсе акнă. Тырпулсене уйхиртен пухса кĕртес ĕçе вăрçăччēнхи 1940 çулхинчен пĕр уйăх маларах вĕçленĕ. Республикăри колхозсем октябрĕн 26-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă парас ĕçе ноябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне, урăхла каласан, унчченхи çулхинчен виçĕ уйăх маларах пурнăçа кĕртнĕ. Колхозсем МТС-сен 1944 çулхи ĕçĕсемшĕн натуроплата шучĕпе тата Хĕрлĕ Çарăн тырпул фондне 105.000 пăт тырă панă. Аш-какай хатĕрлемелли плана та срокчен тултарнă, государствăна 1942 çулхинчен 207.314 пăт ытларах аш-какай панă. Колхозсем иртнĕ 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне мăйракаллă выльăхсем енĕпе 114 процент, сыснасем енĕпе 108,7 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе 112,2 процент тултарнă. 1942—1943 çулсенче колхозсенче мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 58,7 процент, сыснасен хисепĕ 5,7 процент, сурăхсен хисепĕ 99,7 процент ӳснĕ. Колхозсем государствăна 1944 çулшăн аш-какай памалли шутпа мăйракаллă выльăхсем 8 пин пуç ытла, сыснасем 21 пин пуç, сурăхсем 13 пин пуç панă. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсем 7 пин пуç ытла янă.

Сирĕн историллĕ докладăрпа тата хамăрăн Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă чаплă çĕнтерӳсемпе хавасланса, республикăри колхозсемпе колхозниксем государствăна тырă сутас ĕçе патриотла пысăк çĕкленӳпе туса ирттерчĕç. Çак патриотла ĕçе республикăри пур колхозсем те тата çĕр пин колхозник ытла хутшăнчĕç. Пирĕн республикăри колхозсемпе колхозниксем государствăна 2 миллион та 500 пин пăт ытла тырă, 200 пин пăт ытла çĕрулми сутрĕç. Республикăри темиçе çĕр колхоз ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли, выльăх-чĕрлĕхсен хисепне тата вĕсен продуктивноçне ӳстермелли заданисене чылаях ирттерсе тултарчĕç. Колхозсен ăмăртăвĕнче республикăри малти вырăна Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тухрĕ. Вăл кашни гектартан çĕршер пăт тĕштырă туса илнĕ, октябрĕн 1-мĕшĕччен авăн çапса пĕтернĕ государствăна тырă парса татнă. Иртнĕ çулта Вăрмар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Вăрмар районĕнчи «Красный Мурат», Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Советски районĕнчи «Сеятель», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия» тата ытти нумай колхозсем гектартан çĕршер пăт тырă туса илчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем колхоз уйхирĕнче хастарлăн ĕçлерĕç.

Тăван çĕршывăн, колхозлă ялăн чаплă патриочĕсем нумайĕшĕсем ĕçри хастарлăхăн паха примерĕсене кăтартса пачĕç.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем нумай вăй-хал хураççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнгă» колхозăн сысна пăхаканĕ Вазикова юлташ кашни сысна аминчен çулсерен 19—20-шер çăвăр илсе пăхса ӳстерет. 1943 çулта вăл 8 сысна аминчен 152 çăвăр ӳстернĕ. Красноармейски районĕнчи «12 лет Октября» колхозри старши конюх Романов юлташ 54 кĕсререн 53 тиха пăхса ӳстернĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри ĕне сăвакан Иванова юлташ кашни сăвакан ĕнерен 2.878-шар литр сĕт суса илнĕ.

Хаклă Сталин юлташ, эпир хамăр мĕн тумаллине пĕтĕмпех туса çитерменнине тата пирĕн ĕçре çитменлĕхсем нумай пуррине лайăх ăнланса илетпĕр.

Лăпланса ларма тытăнсан çĕнтерĕве аларан вĕçертме пулать тесе Эсир кăтартса панисене эпир яланах асра тытатпăр. Çĕнтерĕве çапăçмасăр, вăй хумасăр алла илме çук, çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ.

Хаклă Иосиф Виссарионович, эпир хамăрăн пĕтĕм вăйсене Сирĕн кăтартăвăрсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре паратпăр тесе шантаратпăр. Хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара ытларах тырпул, аш-какай, апат-çимĕçсем парассишĕн татах та хастарлăнрах ĕçлĕпĕр.

Сире, Иосиф Виссарионович, эпир çуракине лайăх хатĕрленĕпĕр, вăрлăхсене вăхăтра хатĕрлесе хывăпăр, 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пур МТС-сенче те юсаса пĕтерĕпĕр, туртăм вăйне лайăх пăхса усрăпăр тесе, колхозăн çирĕп сăмахне парса шантарса калатпăр.

1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерессишĕн Мари тата Мордва республикисенчи колхозсемпе, колхозниксемпе социализмлă ăмăртăва тухса, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр: тĕштырăсем гектартан 12,5 центнер, çĕрулми 105 центнертан кая мар туса илетпĕр. Кашни тракторпа вăтамран 320 гектар сухалатпăр, кашни комбайнпа 110 гектартан кая мар тырă выратпăр, тракторпа ĕçлекен кашни молотилкăпа 450 тонна тырă çапса илетпĕр. Кашни 100 кĕсре пуçне 50 тиха, 100 сурăх пуçне 110 путек, кашни сысна ами пуçне 11 çăвăр пăхса çитĕнтеретпĕр. Кашни ĕнерен 1100 литр сĕт, кашни сурăхран вăтамран 2,3 килограмм çăм касса илетпĕр. Шăнса пĕтнĕ садсем пулнă çĕр лаптăкĕсен хисепĕнчен çуррине çĕнĕрен йывăççем лартса ӳстеретпĕр, ку таранччен садсем пулман колхозсенче кашнинчех пĕр гектартан кая мар çĕр лаптăкĕ çине улмуççисемпе çырла йывăçĕсем лартатпăр. Колхозниксен пахчисенче кашнинчех 10 — 15-шер улмуççи тата 20—25-шер тĕп çырла йывăçĕ лартатпăр.

Çак обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн хамăрăн вăйсене шеллемесĕр кĕрешĕпĕр. Эпир хамăрăн хастарлă ĕçпе тискер тăшмана çĕнтерес сехете çывхартма мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр.

Пĕтĕм совет халăхĕ халĕ савăнăçлă кунсенче пурăнать, Сталин юлташ, Эсир ертсе пынипе, çĕнтерӳсенче чапа тухнă Хĕрлĕ Çар Хĕвеланăçнелле, малтан малалла куçса пырать, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕнтерес сехете çывхартать. Эпир пĕлетпĕр: çĕнтерӳ çулĕ çăмăл мар. Умра йывăр çапăçусем, йывăр кунсем тăраççĕ. Анчах совет çыннисемшĕн нимĕнле йывăрлăхсем те хăрушă мар.

Пирĕн большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ ертсе пынипе, совет халăхĕ, кирек мĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерсе, тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкĕ.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр аслă çулпуç тата полководец Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН КАНАШЛĂВĔНЧЕ 1944 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 17-МĔШĔНЧЕ ЙЫШĂННĂ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Февралĕн 17-мĕшĕнче ЛУГА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Вĕсем хушшинче—ШИР, СТРАШЕВО, МАШУТИНО, ТУШИТОВО, ОСМЕРИЦЫ, БОЛЬШИЕ ЛЯДЫ, МАЛЫЙ УТОРГОШ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, 14 кун хушши пĕр чарăнмасăр çав тери вăйлă çапăçнă хыççăн, февралĕн 17-мĕшĕнче нимĕçсен КОРСУНЬ-ШЕВЧЕНКОВСКИЙ районĕнче çавăрса илнĕ 10 дивизине тата пĕр бригадине пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 52 пин çын вилнĕ. 11 пин салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Тăшманăн пĕтĕм техникине пирĕн çарсем тытса илнĕ.

ЗВЕНИГОРОДКĂРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пур контратакисене те ăнăçлăн сирсе янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата темиçе пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 78 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 27 самолетне персе ӳкернĕ.

ПИРĔН САМОЛЕТСЕМ ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННĂ

Февралĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ Хельсинки хулине вăйлăн тапăннă. 9 сехет хушшинче çав хулари çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă. Пушарсем вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă. Суднăсем тăвакан верфĕн, çар склачĕсен, суту-илӳ портĕнчи складсен, çар казармисен территорийĕнче тата хулан вăтаçĕрти пайĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Чугун çул станцийĕн, электростанцин тата газ завочĕн районĕнче питĕ вăйлă взрывсем пулнă. Çав пушарсен çулăмне пирĕн летчиксем каялла вĕççе кайнă чухне 200 километртан курнă.

Пирĕн 3 самолет хăйсен базисене таврăнман.

* * *

Луга хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Пĕр участокра совет боецĕсем, хаяррăн çапăçса, гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 8 танк, 14 тупă, 200 автомашинăпа лав тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, хăвăрт малалла кайса, Малый Уторгош ялне йышăннă та тăшманшăн питĕ кирлĕ шоссе çулне татнă. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Пирĕн летчиксем тăшманăн çулйĕрĕсене тата çапăçури речĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахса, 200 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă, пĕр чугун çул эшелонне çĕмĕрнĕ, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă.

Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене тата ялхуçалăхĕнчи специалистсене

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăрçăра иртнĕ çул татăклă улшăнусем турĕ. Совет Союзĕн ирĕке юратакан халăхĕсене гитлеровецсем чуралантарма ĕмĕтленни ĕмĕрлĕхех путланса ларчĕ. Тăван çĕршыва гитлерла вăрă-хурахсенчен тасатса, совет полкĕсемпе дивизийĕсем, вăйлă хум пек, тытса чараймилле хăвăртлăхпа хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ. Темиçе çĕр хулана, темиçе пин яла, темиçе миллион совет çыннине фашистсен пусмăрлăхĕнчен хăтарнă. Нумаях пулмасть пирĕн хисеплĕ Ленин хули, 324 тупăпа 24 хут пĕр харăс персе, хăйне нимĕçсен блокадинчен ирĕке кăларнине паллă турĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хамăр çĕршывран пĕтĕмĕшпех хăваласа ярас вăхăт инçе юлмарĕ.

Фашистла захватчиксене хирĕç пыракан Аслă отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕнчи халăхсен никам аркатайми пĕрлĕхĕпе туслăхĕ çирĕпленсе пыни, вĕсем Тăван çĕршыва—аннене чĕререн юратса, ăна парăнса тăни нихăçанхинчен те ытларах каларчĕç. Вырăссемпе, украинецсемпе, белоруссемпе, литовецсемпе, казахсемпе, тутарсемпе, Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă пулса, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче чăваш халăхĕн ывăлĕсем те паттăррăн çапăçаççĕ. Чăваш республикин 10 мухтавлă ывăлне Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă, 5 пине яхăн рядовой боецĕсемпе офицерĕсене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Фашистла захватчиксене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн кирлисене пурне те çителĕклĕ таран туса парас тесе, рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, пĕтĕм чăваш халăхĕ, хăйсен фронтри мухтавлă ывăлĕсенчен пĕр утăм юлмасăр, фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче ырми-канми тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, 1943-мĕш çулта Чăваш республикинчи колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене иртнĕ çулхисенчен лайăхрах та йĕркеллĕрех туса ирттерчĕç. 1942-мĕш çулхипе танлаштарсан, çурхи тырăсене 12 кун маларах акса пĕтерчĕç. Çурхи тырăсем акмалли плана 18.866 гектар, кĕрхи тырăсем акмалли плана 9.000 гектар ытла тултарчĕç. Вăрçă умĕнхи 1940-мĕш çултипе танлаштарсан, уй-хирти тырпулсене пĕр уйăх маларах пухса кĕртрĕç. Республикăри колхозсем октябрĕн 26-мĕшĕччен авăн çапса пĕтерчĕç, ноябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕç, ку вăл 1942-мĕш çулхипе танлаштарсан, государствăна памалли тырра виçĕ уйăх маларах парса татни пулать. Кунсăр пуçне, республикăри колхоз-

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене тата ялхуçалăхĕнчи специалистсене

Юлашки

сем 1944-мĕш çулшăн натуроплата шучĕпе тата Хĕрлĕ Çар фондне 105.000 пăт тырă хыврĕç. Аш-какай памалли плана та срокчен малтан тултарнă—1942-мĕш çулхипе танлаштарсан, государствăна 207.314 пăт ытларах аш-какай панă.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) „Колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен шучĕпе вĕсен хăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен" йышăннă постановление пурнăçа кĕртсе пырса, республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра выльăхсем тĕлĕшпе 114%, сыснасем тĕлĕшпе 108,7%, сурăхсем тĕлĕшпе 112,2% тултарчĕç. 1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсем хушшинче колхозсенчи майракаллă шултăра выльăхсен шучĕ 58,7%, сыснасен шучĕ 5,7%, сурăхсен шучĕ 99,7% ÿсрĕ. Кунсăр пуçне, 1944-мĕш çулта государствăна аш-какай памалли обязательство шучĕпе 8.000 пуç ытла майракаллă шултра выльăх, 21.000 сысна, 13.000 сурăх панă. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 7.000 пуç ытла выльăх янă.

Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă май тунă докладне ответлесе, республикăри колхозсенче обязательнăй поставкăна тултарнă хыççăн государствăна тырă сутас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ, çак ĕçе вара колхозниксемпе колхозницăсем массăллă хутшăнса хăйсен патриотизмне ĕçпе кăтартса пачĕç. Çак патриотла паха та пысăк ĕçе республикăри мĕнпур колхозсемпе 100 пин ытларах колхозник хутшăнчĕç. Пирĕн республикăри колхозсемпе колхозниксем государствăна икĕ миллион та пилĕкçĕр пин пăт ытларах тырă, икĕ çĕр пин пăт ытларах çĕрулми сутрĕç. Хамăр Тăван çĕршывăн чи лайăх патриочĕсем: Елчĕк районĕнчи „Марс" колхозăн председателĕ Абдулл Гаязович Гаязов юлташ, Вăрнар МТС-чи трактористка Елизавета Арсентьевна Арсентьева юлташ, Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Иван Петрович Краснов юлташ, Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнер Петр Маркиянович Маркиянов юлташ, Советски районри „Майăн 1-мĕшĕ" колхозăн председателĕ Матвей Афанасьевич Афанасьев юлташ тата ыттисем те хăйсем ĕçлесе илнĕ тырăран государствăна 100—175-шер пăт сутрĕç.

Ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерессишĕн государство умĕнчи обязательствăсене срокченех тултарассишĕн пынă социализмлă ăмăртура иртнĕ çулта Вăрнар районĕнчи колхозсем паха çитĕнÿсем турĕç. Вĕсем пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтерсе пухса кĕртрĕç, государство умĕнчи обязательствăсене ялхуçалăхĕн мĕнпур продукчĕсем тăрăх республикăра чи малтан тата срокчен тултарчĕç, планран ирттерсе государствăна 150 пин пăт ытла тырă сутрĕç, çуракинче акса хăвармалли çуртырри вăрлăхĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе хучĕç. Ырми-канми тăрăшса ĕçленипе Вăрнар районĕнчи колхозсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш хут хăйсен аллинчех хăварчĕç.

Колхозсенчи пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстерессишĕн пыракан социализмлă ăмăртура Элĕк районĕнчи колхозсем пĕрремĕш вырăна йышăнса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕç. Вĕсем, выльăх-чĕрлĕхпе лашасен хисепне ÿстерес тĕлĕшпе панă заданисене ыттисенчен авантарах пурнăçласа, выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне самаях хăпартрĕç.

Иртнĕ çулта республикăри темиçе çĕр колхоз ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, фермăсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепне йышлатас, вĕсен тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе панă заданисене чылаях ирттерсе тултарчĕç. Çапла, сăмахран, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хăй аллине илнĕ колхоз, вăтам шутран кашни гектартан 100 пăт тĕштырă туса илчĕ. Çак колхоз октябрĕн 1-мĕшĕччен авăн çапса пĕтерсе государствăна пĕтĕмпех тырă парса татрĕ, 1944-мĕш çулшăн та обязательство шучĕпе тырă нумай пачĕ, кунсăр пуçне государствăна 11.400 пăт тырă сутрĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Вăрмар районĕнчи „Хĕрлĕ Мурат" колхоз, Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз, Советски районри „Сеятель" колхоз, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Хĕрлĕ Çар" колхоз тата ытти колхозсем те иртнĕ çулхине гектартан çĕршер пăт тырă туса илчĕç.

Уй-хир бригадисемпе колхозсенчи звеносем нумайĕшĕ çĕр ĕçĕсене юратса ĕçлесе, çĕртен вăл пама пултарнă таранах тухăçлă тырпул туса илме тăрăшаççĕ. Çапла, сăмахран, Калинино районĕнчи „Клевер" колхозри 3-мĕш бригада кашни гектартан 193-шар пăт çурхи тулă туса илчĕ, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри Миронова юлташăн бригади 161 гектар çинчен вăтамран 140-шер пăт тĕштырă туса илчĕ, Кувакино районĕнчи „Ударник" колхозри Тюрина юлташăн звени кашни гектартан 77-шер центнер махорка туса илчĕ, Комсомольски районри „Çутă пурнăç" колхозри Мокеев юлташăн звени кашни гектартан 19,7-шер центнер чĕрĕ кок-сагыз тымарĕ, 31-шер килограмм кок-сагыз вăрлăхĕ туса илчĕ.

Иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракансем те пысăк çитĕнÿсем турĕç. Сĕнтĕр районĕнчи „Çĕнĕ Юнгă" колхозри чаплă свинарка Фекла Михайловна Вазикова юлташ çулсеренех кашни сысна аминчен 19-20-шер çăвăр çитĕнтерсе ÿстерет. 1943-мĕш çулта вăл 8 сысна аминчен 152 çăвăр çитĕнтерсе ÿстерчĕ, çакăншăн ăна ĕçкунĕсем тăрăх хушса 14 çăвăр пачĕç; Красноармейски районри „12 лет Октября" колхозри старши конюх Василий Романович Романов юлташ 54 кĕсререн 53 тиха тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерчĕ; Çĕрпÿ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка Вера Ивановна Иванова юлташ кашни сăвакан ĕнерен 2878-шар литр сĕт туса илчĕ; Çĕмĕрле районĕнчи „Комбинат" колхозри пчеловод Василий Михайлович Ванюков юлташ кашни вĕллерен вăтамран 53,6-шер килограмм пыл туса илчĕ, çакăншăн ăна ĕçкунĕсем тăрăх хушса 226 килограмм пыл панă.

Иртнĕ çулта машинăпа трактор станцийĕсенчи трактористсемпе комбайнерсем тата ытти работниксем те нумайĕшĕ ырми-канми тăрăшса ĕçлерĕç. Шăмăршă МТС-ĕнчи комбайнер Владимир Тимофеевич Фадеев юлташ икĕ комбайнпа сезонра 800 гектар çинчи тырпулсене вырса пуçтарчĕ тата 510 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ; Шăхасан МТС-ĕнчи Тимофеев юлташăн трактор бригади тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 170% тултарса, 3 пин килограмм ытларах горючи перекетлерĕ. Çĕрпÿ МТС-ĕнчи комбайнер Михаил Захарович Громов юлташ хăйĕн комбайнĕпе сезонра 405 гектар çинчи тĕш тырăсене пухса кĕртсе, 560 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Йĕпреç МТС-ĕнчи чаплă комбайнер Петр Маркиянович Маркиянов юлташ, Вăрнар МТС-ĕнчи трактористка Елизавета Арсентьевна Арсентьева юлташ тата ытти нумай юлташсем те чаплă çитĕнÿсем турĕç. Пуринчен те лайăх Шăхасан МТС-ĕн коллективĕ ĕçлерĕ. Вăл тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 105% тултарса, 11.900 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ.

Сталин юлташ Октябрьти социализмла аслă революци 26 çул тултарнă ятпа тунă докладра совет хресченĕсен ĕçне пысăк хак пани пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать. 1943-мĕш çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерсе, пирĕн республикăри нумай колхозсем, 1944-мĕш çулта татах та пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесе, çитес çуракине пур енчен те лайăх кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Эпир çакна аванах пĕлсе тăратпăр: пирĕн çитĕнÿсем кунпа вĕçленмеççĕ-ха, эпир малашне татах та пысăк çитĕнÿсем тума та пултаратпăр, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне татах та ÿстерес тĕлĕшпе эпир хамăр тума пултарнине пĕтĕмĕшпех пурнăçламан-ха.

Малта пыракан колхозсемпе пĕр пек условисенче пулсассăн та, çуллен начар тырпул туса илекен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар ĕçлекен колхозсем те пирĕн чылай-ха. Ун пек колхозсем уйрăмăнах Шăмăршă, Чкаловски, Пăрачкав, Кувакино районĕсенче ытларах. Фронт тата Тăван çĕршыв пирĕнтен ытларах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем ыйтаççĕ. Ăнăçлăн малалла çĕнтерсе пыракан Хĕрлĕ Çара пулăшу парас ĕç пирĕн кунран кун ÿссе пымалла. Çавăнпа та малта пыракан колхозсенче кăна мар, республикăри ытти мĕнпур колхозсенче те колхозниксемпе колхозницăсен хăйсен уй-хирĕсенче пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, мĕнле пулсан та ытларах тĕштырă, çĕрулми, пахча çимĕçĕсем, аш-какай т. ыт. ялхуçалăх продукчĕсем туса илмелле. Пирĕн, хамăр тăван çĕршывшăн паттăррăн кĕрешекенсем пекех, çирĕп тăрса ĕçлемелле.

Юлташсем! Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çураки çывхарса килет. Ялхуçалăх ĕçĕнче ку вăхăт чи ответлă вăхăт. Çураки, иртнĕ çулхи пекех, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче пулса иртет. Çавăнпа та кашни колхозникпе колхозницăн, кашни трактористпа комбайнерăн, ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен пурин те çавна тĕплĕ ăнланса илсе, çуркуннехи уй-хир ĕçĕсене лайăх хатĕрленсе, ăнăçлă ирттерме хăйсен пĕтĕм вăйĕсене хурса ĕçлемелле. Çĕршыва тата фронта ялхуçалăх продукчĕсем çителĕклĕ таран парса пырасси, çаплах ĕнтĕ, хамăр Хĕрлĕ Çарăн малашнехи çĕнтерĕвĕсем те эпир колхозра епле çине тăрса ĕçленинчен килнине асра тытмалла.

1944 ялхуçалăх çулĕнче пур ялхуçалăх культурисене те вăрçă вăхăтне кура пысăк тухăçлăхпа туса илесси—пирĕн боевой задача пулса тăрать. Ку задачăна ăнăçлăн татса паракан условисенчен пĕри—çураки валли вăрлăха вăхăтра та лайăх пахалăхлă хатĕрлесе хурасси пулать. Халех, пĕр кун сая ямасăр, çураки валли вăрлăха тĕплĕн хатĕрлесе хумалла. Вĕсене тасатмалла, мĕнле шăтнин пахалăхне тĕрĕслемелле.

Вăрçă вăхăтĕнче, çĕршывпа фронта тырă нумай кирлĕ чухне, эпир пĕр гектар çĕр лаптăкĕ те акмасăр хăварма пултараймастпăр. Анчах та хăшпĕр колхозсем вăрлăх пирки çителĕклĕ таранах тăрăшмаççĕ-ха, çавăнпа та вĕсем халиччен те хăйсем валли вăрлăх хатĕрлесе çитермен. Халех тĕштырă, техникăллă культурăсем, çĕрулми тата ытти культурăсен вăрлăхĕсене тупса хатĕрлес пулать, çавна май вăрлăха колхозниксенчен пухмалла тата колхозсен пĕр-пĕринчен кивçен илмелле пулать.

Пирĕн чылай колхозсен пысăк çитменлĕхĕ вăл темиçе çул хушши ÿсекен курăксем акас плана çулран-çулах тултарса пыманни пулать. Çавăн пирки пусуçаврăнăшĕ пăсăлать, çĕр начарланать, тырпул тухăçлăхĕ чакать, выльăх-чĕрлĕх апачĕ те çителĕклĕ пулаймасть. Кашни колхозăн çав темиçе çул хушши ÿсекен курăксем акас плана пĕтĕмпе тултармалла. Пур колхозсенче те халех клевер, люцерна тата ытти курăк вăрлăхĕсене тупса хатĕрлесе хумалла, вăрлăхлăх çулса илнĕ курăксене халиччен çапса пĕтермен пулсассăн, вĕсене халех çапса пĕтермелле, тата тепрер хут çапса, пучахĕсене сăтăрса шĕкĕлчесе илмелле. Пысăк тухăçлă тырпул туса илесси—çураки ĕçĕсене вăхăтра та йĕркеллĕ туса ирттернинчен килет. Ахалтен мар „Çуркунне сая янă куна çулталăкĕпе те тавăраймăн", теççĕ халăх хушшинче. Мĕнпур МТС-сенче, колхозсенче апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая хăвармасăр тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсаса çитермелле, мĕнле юсанине тĕплĕн тĕрĕслемелле, вара вĕсене трактористсем, сухалакансем, акакансем çумне малтанах çирĕплетсе хумалла.

Уйрăмах лашасене çураки тĕлне хатĕрлеме кирлине асра тытмалла. Вăйран кайнă, начартарах лашасене пурне те халех кантарма, лайăхрах çитерме тытăнмалла. Лашасене пăхас ĕçри тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пачах пĕтермелле, çураки вăхăтĕнче лашасене çитерме халех лайăх апат уйăрса хумалла. Кашни лаша валли юрăхлă кÿлмелли ут таврашĕсем туса хатĕрлемелле. Лашасене çуракине хатĕрленипе пĕрлех, кашни колхозăн вăкăрсене тата сахал сĕт паракан ĕнесене кÿлме хăнăхтарса, лашасене колхозри хăшпĕр ĕçсене кÿлсе тухассинчен хăтарса, çуракинче сухапа сÿрере анлăн усă курмалла тăвас пулать.

Халăхăн тата тепĕр аслă сăмахне те: „тислĕке тăк ытларах, тырри пулĕ вăйлăрах" тенине ялан асра тытмалла.

Канашлу пĕтĕм колхоз руководителĕсене, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, республикăри малта пыракан колхозсенчен примерсем илсе, вырăнти удобренисене ытларах хатĕрлесе, хире тăкассине анлăн сарса яма чĕнет.

Тата ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансем хăйсен уйĕсенче агротехника мелĕсемпе пĕлсе усă курнипе лайăх тырпул туса илнине те асра тытас пулать. Колхозсенче агротехникăна вĕренессине анлăрах сарса ярар, колхозниксемпе колхозницăсене малта пыракан стахановла агротехникăпа усă курма вĕрентер.

1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерме Мари тата Мордва АСС Республикисемпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир, Чăваш республикинчи ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен канашлăвĕн участникĕсем, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илсе, пĕтĕм колхозниксене, колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене тата ялхуçалăх специалисчĕсене çак обязательствăсене вăйлăн пурнăçа кĕртме чĕнетпĕр:

Кашни гектартан вăтамран 12,5 центнертан кая мар тĕштырă, 3 центнертан кая мар йĕтĕн сÿсĕ, 4 центнертан кая мар кантăр тата 105 центнертан кая мар çĕрулми туса илмелле.

Çапла тăвас тесе, пĕтĕм уй-хир ĕçĕсене малта тăракан агротехника кăтартнă пек туса ирттермелле, кашни колхозрах вырăнти удобренисем хатĕрлесе анасем çине тăкас плана тултармалла. Пĕтĕм республикипе тислĕк 1.800.000 тоннăран кая мар, торф 200.000 тоннăран кая мар, кĕл 80.000 центнертан кая мар, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 60.000 центнертан кая мар хире тăкмалла.

Клевер тата нумай çул хушши ÿсекен ытти курăксене акса хăварас тĕлĕшпе пусу çаврăнăшĕ тăрăх кăтартса панă плана кашни колхозăн пурнăçа кĕртмелле. Пĕтĕм республикипе нумай çул хушши ÿсекен курăксене пурĕ 30.000 гектартан кая мар акса хăвармалла. Кашни колхозрах курăксене акса тăвас ĕçе çитес икĕ çул хушшинче анлăн сарса ярас тĕлĕшпе кирлĕ вăрлăха çителĕклĕ таран туса илмелĕх уйрăм вăрлăх участокĕсем уйăрса хумалла.

Вăтам шутпа кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 320-шер гектар çĕр ĕçлемелле, кашни комбайнпа 110-шар гектартан кая мар тырă пухса кĕртмелле, тракторпа ĕçлекен кашни молотилкăпа 450-шар тоннăран кая мар тĕштырă çапмалла.

Кашни 100 кĕсре пуçне 50 тихаран кая мар пăхса çитĕнтермелле; кашни 100 сурăх пуçне 110 путекрен кая мар, кашни сысна ами пуçне 11 çăвăртан кая мар пăхса çитĕнтермелле. Кашни усракан ĕне пуçне вăтамран 1100 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран вăтам шутпа 2,3 килограмшар çăм касса илмелле.

Пур колхозсенче те хур-кăвакал фермисем тумалла, çак тĕлĕшпе 1944-мĕш çулта кашни колхозăнах 10—15 пуçран кая мар хур-кăвакал туянмалла.

Хурт-хăмăр çук колхозсенче кашнинчех утарсем тумалла, вĕсенче 40 вĕллерен кая мар хурт-хăмăр пулмалла.

Сивĕпе хăрса пĕтнĕ мĕнпур садсенчен çурринчен кая мар 1944-мĕш çулта çĕнĕ йывăççем лартса чĕртмелле, халиччен садсем пулман колхозсенче пĕр гектартан кая мар çĕр лаптăкĕ çине улмуççисемпе çырла йывăççисем лартмалла. Колхозниксен кил вырăнĕсен участкисем çине 10—15-шер тĕп улмуççи, 20—25-шер тĕп çырла йывăççисем лартмалла.

Хаклă юлташсем! Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-пе совхозсенчи работниксем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем! Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ пире фронта татах та ытларах пулăшма, фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем пама чĕнчĕ. Çулпуçăмăр чĕннине ответлесе, çуракине ăнăçлăн хатĕрленессишĕн, пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн социализмлă ăмăрту татах та анлăрах сарса ярар. Пĕтĕм Союзĕпе пыракан социализмлă ăмăртура республика пĕрремĕш вырăн йышăнтăр тесе мĕнпур вăйпа тăрăшар.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве организацилесе хавхалантарса пыракан Ленин—Сталин партийĕ, сывă пултăр!

Хамăрăн çулпуçăмăр, учителĕмĕр, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ сывă пултăр!

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН КАНАШЛĂВĔНЧЕ 1944 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 17-МĔШĔНЧЕ ЙЫШĂННА

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра

ВЦСПС-па пĕр Халăх комиссариачĕ тивĕçлĕ отраслĕсен промышленность работникĕсен пĕтĕм Союзри Социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш премии пама йышăннă.

Ку завод коллективĕ 9 уйăх ĕнтĕ Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Рабочисемпе работницăсем çак награда çине ĕç тухăçлăхне хăпартнипе ответлеççĕ. Руденко, Киричек юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсем февраль уйăхĕнче пур цехсенчен те малта пыраççĕ. Матвеева, Терентьева, Леонтьева, Димитриева стахановкăсем нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçleme тытăнчĕç. Вĕсем ку уйăхра заданине тăтăшах 250—300 процент ытла тултараççĕ.

— Эпир Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăран вĕçертмĕпĕр. Фронтпа çĕршыва кирлĕ продукци туса парас ĕçре вăя шеллемесĕр ĕçлĕпĕр, — теççĕ заводри рабочисемпе работницăсем.

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ

Февралĕн 13-мĕшĕнче профсоюзпа комсомолăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланчĕ. Республикăри нумай пин комсомолецсемпе çамрăксем йĕлтĕр çине тăрса ăмăртăва тухрĕç. Вĕсем хăйсем йĕлтĕр спортне юратнине, йĕлтĕрпе пысăк мастерлăхпа çÿреме пултарнине кăтартаççĕ. Малтанлăха шутланă тăрăх, кроса 23.357 çын хутшăннă. Вĕсенчен 19.397 çын малтанхи кунах ГТО тата БГТО нормисене панă. Кросс Çĕрпÿ, Етĕрне, Шупашкар, Елчĕк, Советски районĕсенче, Канаш хулинче лайăх пуçланнă. Канаш хулинче кроса пурĕ 1.353 çын хутшăннă. Вĕсенчен 1.335 çын БГТО тата ГТО нормисене панă. Çĕрпÿ районĕнче 1.593 çын, Етĕрне районĕнче 1.016 çын, Советски районра 548 çын хутшăннă.

Республика столицинче те кросс начар мар иртет. Малтанхи кун старта 2.055 çын тухрĕç. Вĕсенчен «Динамо» обществинчен кăна 525 физкультурник, хулари всевобуч пункчĕсенчен 300 çын ытла хутшăннă. Уйрăмăнах динамовецсем лайăх результатсем пачĕç. Карчевский юлташ 10 километра 38 минут та 50 секундăра, П. Васильев—49 минут та 15 секундăра чупса тухрĕç. Хĕрарăмсенчен Ступакова юлташ 3 километра 14 минут та 15 секундăра чупса тухрĕ. Малтанхи кун хулара пĕтĕмпе 2.005 çын ГТО нормисене панă.

Анчах кроса ирттерес ĕçе хăшпĕр çĕрте тивĕçлипе хакламаççĕ-ха.

Кувакино, Вăрнар, Октябрьски Тăвай районĕсенче кроса хутшăнакансен йышĕ пĕчĕккĕ. Сăмахран, Кувакино районĕнче кроса малтанхи кун 102 çын çеç хутшăннă. Вĕсенчен 74-пĕ кăна нормăсем панă. Çавăн пекех Вăрнар районĕнче—219 çын, Тăвай районĕнче—205 çын çеç хутшăннă.

Кроса организованно ирттересси профсоюзсем активлă хутшăнса ĕçленинчен килет. Профсоюзсен вырăнсенчи организацийĕсем профсоюз членĕсем кроса мĕнле хутшăннине тата тренировкăна ирттернине тĕрĕслесе тăмалла.

Профсоюзпа комсомолăн кросĕ мартăн 1-мĕшĕччен пырать. Кросра пулмалли çынсене тĕплĕн шута илсе тухмалла. Унта хутшăнмасăр пĕр çамрăк та ан юлтăр.

Йĕлтĕрлĕ кроса лайăх ирттерме пирĕн пур майсем те пур. ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен çак масăллă ăмăртăва тивĕçлипе организацилес пулать.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ КАЛЛЕХ БЕРЛИНА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин пĕр пин бомбардировщикĕ ытла каллех Берлина питĕ хăватлăн тапăннă. Хула çине пĕр 20 минут хушшинче кăна 2.500 тонна ытла бомба пăрахнă. Ку таранччен пулнă чи вăйлă тапăнура иртнĕ январĕн 20-мĕшĕнче пăрахниччен тата 200 тонна ытларах пăрахнă.

Йывăр бомбардировщиксем хăйсен бомбисене пăрахса пĕтернĕ хыççăн Берлина «Москито» йышши бомбардировщиксем атакăланă. Пушар тĕтĕмĕ Берлин çинче 6.000 метр çÿлелле хăпарнă.

Хăйсен базисене 45 самолет таврăнман. Англи самолечĕсемпе çапăçма нимĕçсен каçхи истребителĕсем нумаййăн тухман, анчах та зенитнăй артиллери вучĕ самаях вăйлă пулнă.

Берлина тапăннă вăхăтрах «Ланкастер» йышши самолетсем, нимĕç самолечĕсен темиçе çĕрте те çапăçмалла пултăр тесе, тăшманăн Голландири тата Хĕвеланăç Германири чылай объекчĕсене тапăннă.

БОЛГАРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СОФИЯ, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин шалти ĕçсен министрĕ Христов правительствăна çывăх тăракан организацисен мĕнпур членĕсене обязательнăй йĕркепе тата яланах Софире пулма хушакан распоряжени кăларнă. Çав членсен власть органĕсем хушшине тума хатĕр тăмалла. Çак распоряжение пăхăнманнисене ответ тытараççĕ.

СОФИЯ, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин министрсен совечĕ пĕтĕм автотранспорта юсакан мастерскойсене тата автотранспортпа çыхăнса тăракан мĕнпур пулăшуллă предприятисене çар законĕсене пăхăнса тăма хушакан распоряжение çирĕплетнĕ. Темиçе облаçра облаçри çарпа хуçалăх автомобилĕсен паркĕсене тăваççĕ, вĕсем офицерсен-специалистсен аллинче пулаççĕ. Автомобиль çÿрекен çулсем, мастерскойсем, складсем тата ытти учрежденисем те офицерсемпе унтер-офицерсен аллинче пулаççĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ ГИТЛЕР «ГАУЛЕЙТЕРНЕ» МЕЙЕРГОФЕРА ВĔЛЕРНĔ

СТАМБУЛ, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсен Турцире тухакан «Тюркише пост» ятлă хаçачĕ Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче «гаулейтера» Франц Мейергофера вĕлерни çинчен пĕлтерет.

АНГЛИРЕ ХĔРЛĔ ÇАР 26 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ УЯВЛАМА ХАТĔРЛЕННИ

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 23-мĕшĕнче Лондонра тата Шотландири, Уэльсри, Çурçĕр Ирландири чи пысăк хуласенче Хĕрлĕ Çар кунне уявлаççĕ. Лондонра пулса иртекен праздникре шалти ĕçсен министрĕ Герберт Моррисон сăмах тухса калать. Эдинбург хулинче тĕп оратор пулса авиаци министрĕ Арчибальд Синклер сăмах тухса калать. Кардифф хулинчи массăллă митингра çĕрĕç министрĕ Хадсен сăмах тухса калать. Бельфаст хулинче парад пулать. Парадра тинĕс çар министрĕ Александер тата Çурçĕр Ирландин премьер-министрĕ Брук пулаççĕ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн кăçалхи январĕн 18-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх Чкаловски район центрне Патăрьелне куçарнă, район ятне ĕлĕкхинех хăварнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00012 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.100 экз